# Пирĕн авторсен пултарулăхĕ

**Хĕветĕр САВГАЧЕВ**

## Çунашка

Пур тавралăх пĕркенчĕ
Äшă шурă виттипе.
Çил ачи пире чĕнчĕ
Ярăнма ту хĕррипе.

Тăман вĕçтерсе анан
Çунашкапа сăрт çинчен.
Äна туртса хăпарман
Хĕнпе çÿле çитиччен.

Çут тĕнчере пурăнма
Хĕл мучи те вĕрентет:
— Кам юратать ярăнма —
Çунине те турттăр,— тет.

Çĕрле тата вăй илсен
Лайăх ĕçлен, вĕренен.
Каллех ярăнас тесен,
Çунашкуна кÿлĕнен.

Çунашкапа ярăнни
Тĕреклетет сывлăха.
Пурте пĕрле выляни
Çирĕплетет туслăха.



**Оксана ЧУХАЕВА**

## Тăван кĕтес

Тăван ял, тăван кĕтес...
Сенкер тÿпе, таса тавралăх.
Епле хитре, илемлĕ эс,
Вăрман та сăрт, пирĕн
хастарлăх.
Çуралнă ялăм Хаяслă,
Пирĕнтен вăл пит аслă.
Юрататăп эп ăна,
Хам çуралнă вырăна.

Аксу районĕ,
Çĕнĕ Хаяслă.

**Светлана БЛИНОВА**

## Ирина

Иринаçăм, Ирина,
Юрататăп-çке сана,
Юрататăп куллуна,
Акăш евĕр уттуна.

Иринаçăм, Ирина,
Телейлĕ пул пурнăçра,
Аса ил хăш чух мана,
Кăшт салхуллă вăхăтра.

**Петр ГАВРИЛОВ-МЕРЕЧЕН**

## Юрату пуçламăшĕ





Пит хĕрÿллĕ иртрĕ чĕрĕк,
Эп вĕрентĕм тăрăшса.
Ман юлташĕ кÿршĕ хĕрĕ,
Вăй вылянă юр ашса.

Урока та хатĕрленнĕ
Юнашар ларса куллен.
Пĕр-пĕриншĕн хăпĕртенĕ
Лайăх вĕреннипелен.

Халь эпир ÿссе çитетпĕр,
Вăтанма пуçларăмăр.
Маншăн вăл сар кайăк евĕр,
Пĕр-пĕрне куçларăмăр.

Хĕр çинчен шутлатăп вĕççĕр,
Çывăрма выртсассăн та,
Тĕлĕкре курасчĕ кĕçĕр
Пурçăн тумлă вăрманта.

Юрату çапла пулать-ши? —
Тĕлĕнетĕп эп хамран.
Хĕр ман шухăша туять-ши,
Кулмĕ-ши сиссен манран!

Пурпĕрех хăйса калаймăп
Чун-чĕре хĕмленнине,
Урăх никама саваймăп:
Пăркăçлаймăп чĕрене.

Маншăн спорт вăййи
сăваплă,
Палăрасчĕ-ха шкулта.
Кĕрешме кирлех хăватлăх,
Ытларах ĕçлес тулта.

Çирĕп йĕкĕте тиркеймĕç
Салтака кайма лексен,
Шкулĕпех мана хисеплĕç,
Чунĕ туртăнĕ пикен.

Эп сăра та тутанмастăп,
Кирлĕ мар пирус-сигар.
Нихăçан çынна хĕртмастăп,
Ма пулас карма çăвар?

Ват çынна хисеп тăвасчĕ,
Пулăшасчĕ кирлĕ чух.

Концертра хитре юрласчĕ,
Äшшăн пăхтăр савăк чун.

Ĕç тесен — вут пек çунатăп,
Вулама та ÿркенмен.
Аслă шкул çинчен шутлатăп:
Вĕренни — ахах, мерчен.

Кÿршĕ хĕрĕ — çут хĕвелçĕм,
Юратмашкăн тивĕçех,
Пуртăр-ха чунра телейçĕм, —
— Шанчăк, кайăк пек вĕçех!



Пĕчĕк арçын ача урайĕнче машинăпа вылять:

— Р-р-р-р, анне, эпир хăçан апат çиетпĕр?
— Часах, ывăлăм.

Икĕ минутран:

— Р-р-р-р, анне, хăçан çиетпĕр?
— Кăштах тăхта-ха, часах апатланăпăр.

Пĕр минутран:

— Анне, ну хăçан çиетпĕр?
— Йăлтах хатĕр, лар та çи.
— Анне, тата кăштах выляма юрать-и?

* * *

Пĕчĕк Ваня хăнасенчен ыйтать:

— Эсир нумай ларатăр-и кунта?
— Мĕншĕн?
— Манăн питĕ çиес килет...
— ?!
— Атте эсир кайсан çеç çийĕпĕр терĕ.

* * *

Марине вар ыратнипе аптранă.

— Ачам, кам харăс темиçе çăмарта çисе ярать вара? — ятлаçать амăшĕ пепкине эмел ĕçтернĕ май.
— Ара, аннеçĕм, хăвах калатăн-çке, хăвăртрах ÿсме нумайрах çимелле тесе.

* * *

— Мĕн çитмест-ши пирĕн пурнăçра? — юрлать Анюкăн амăшĕ апат пĕçернĕ май.
— Шăккалат çитмест мана пурнăçра-а-а! Барби пукане çитме-е-ест, — хăйне евĕр шăрантарать пуканепе выляса ларакан Анюк.



# Маттур

*(Новелла)*

Шăпланчĕ тĕнче, шăпланчĕ... Пушлăх пуçланчĕ. Ĕнер çеç шавпа кĕрлесе тăнă тĕнче, паян — шăпланчĕ...

Яту çеç манăн асăмра яланлăхах юлчĕ. Яту çеç, хаклă тусăм — Маттурăм. Ытти йытăсен ячĕсем: Тузик, Шарик, Барбос... Санăн вара Маттурччĕ. Урăхла пулма та пултараймен, мĕншĕн тесен эсĕ тивĕçлĕ çак ята, тивĕçлĕ...

Астăватăн-и, эпĕ сана пĕчĕккĕскере тата йĕпенсе, шăнса кÿтнĕскере, Усрав çырми патĕнчен тупса килнĕччĕ. Чăпăл туса, äшă йăвана вырнаçтарнăччĕ. Типĕ утă сарса парсан вара эсĕ мана äшă кулă — тав кулли парнеленĕччĕ. Мана питĕ, питĕ йывăр килнĕ вăхăтра эсĕ пĕрремĕш лăплантару кулли, шанчăк кулли парса вăй-хала çирĕплетме пулăшнăччĕ. Эпĕ сана çаваншăнах «Маттур» тесе чĕнме пуçларăм.

Äнланаттăн эсĕ мана, пĕчĕк пулсан та, хăлхусене вылятса илеттĕн, äшшăн пăхаттăн.

Эпĕ калаçма пуçласассăн яланах шухăшлă куçусемпе мана тинкерсе шăппăн лараттăн.

Паян вара шăппăн... выртатăн. Урăх нихăçан та ларса итлеймĕн эсĕ мана, Маттурăм. Кам айăплă? Кам? Виççĕ те тултарма ĕлкĕреймен вĕт-ха эсĕ?

«Тăвана тăванла хисеп ту эс, ачам, юлташа юлташла эсĕ пулăш», — пĕчĕккрен вĕрентетчĕ анне. Анчах вĕрентмен-çке пире: «Кам тăван? Кам тăшман? Тăшманне уйрăмрах тăвайман».

Такамăн чунсăр алли сана паян, Маттур, уйăрнă манран. Пĕртен-пĕр лăпланăва, пĕртен-пĕр шанчăка каллех уйăрчĕç паян манран. Мĕншĕн? Мĕншĕн? Нивушлĕ çапла хăр тăлăх пулса пурăнмалла ман çĕр çинче?

Çак тĕрĕс те чăн çырса кăтартнă хайлавăмсемшĕн? Никам та, никам та айăплă мар. Пĕртен-пĕр эпĕ, эпĕ айăпли — вĕсене çыраканни, хайлавçи.

Маттурăм, эсĕ — айăпсăр, айăпсăр... Çывăр канлĕн, манăн пĕртен-пĕр шанчăкăм, пĕртен-пĕр йăпанусăм, Маттур...

Андрей ШУР.
Сăнÿкерчĕк Василий МАРТИНКОВĂН.

# Манăн кукамай

Валентина Лаврентьевна Миронова — манăн кукамай. Вăл Аксу районне кĕрекен Чăваш Енрусьелĕнче 1938 çулта çуралнă. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулсенче крахмал пашалăвĕпе курăк яшкине çисе сывă юлнă. Кукамай ĕмĕрĕ тăршшĕпех фермăра дояркăра ĕçленĕ, яланах малти ретре пулнă, çавăнпа ăна хаклă парнесем, Хисеп грамотисем парса чыс тунă. Ĕç ветеранĕ ятне те илме тивĕçнĕ. Астăватăп-ха, ĕçленĕ чухне яланах юрă шăрантаратчĕ. Унăн сасси чуна тыткăнлатчĕ. Мĕн чухлĕ юрă пĕлетчĕ кукамай.

Мĕнле йывăр пулсан та, кукамай çичĕ ача çуратса ура çине тăратнă. Унăн мăнукĕсем те нумай. Äна эпир пурте юрататпăр та, хисеплетпĕр те. Вăл та пире юрататчĕ. Ун патне кайсан вара чей ĕçтермесĕр кăларса ямастчĕ. Пĕртте ĕçсĕр лармастчĕ кукамай. Çĕлетчĕ те, алси-чăлхине те çыхатчĕ, çавăнтах мăнукĕсене те пăхатчĕ.

Эпир кукамайпа туслăччĕ. Анне Шупашкара вĕренме кайсан мана вăл яланах пулăшатчĕ. Эпĕ те ăна йывăр вăхăтсенче пĕччен хăварман. Анчах вăл чирлесе ÿкрĕ, больницăра нумай выртрĕ. Сывалаймарĕ кукамай... Лайăх çынччĕ вăл. Эпĕ ăна нихăçан та манмастăп.

Алена КРАСНОВА,
7-мĕш класс вĕренекенĕ.
Аксу районĕ,
Чăваш Енрусьел.

# Куçа илĕртекен улмуççисем

*«...Этот старый вяз словно центр Мироздания. Могучий, кряжистый, ладный, Бог весть что повидавший на своем веку. В кроне своей он был способен укрыть несметную стаю грачей, которая взрывалась вдруг сумасшедшим фейерверком от озорного окрика или удара палкой о пустое ведро».*

Наталья Киселева.

Кĕркуннепе, çĕр çумĕпе эрешмен картисем хĕвел çути çинче йăлтăртатма тытăнсан, эпир урам урлă Ильтукан пиччепе Варук аппан пахчинче ÿсекен улмуççисем çине куç илмесĕр пăхаттăмăр. Мĕн тăвăн — ачалăх...

Вĕсен вĕтĕ панулмийĕсем çулçă саралма-хĕрелме пуçласан тин пиçме пуçлатчĕç. Ильтукан пичче тунă хапха çине хăрах урана хураттăмăр, теприне — пралукран каркаласа тунă карта çине. Вара тин кĕрпеклĕ, витĕр вăрри курăнмалла пиçсе çитнĕ панулмисене савăнса тататтăмăр.

Питĕ тутлăччĕ вĕсем, кĕркунне çеç пиçсе çитекен панулмисем. Хăйсем саррăнписевĕн курăнса, лăпкă çил çинче вĕлкĕшсе, саралнă, ÿкме патне çитнĕ çулçăсемпе сывпуллашнă пек тем чăштăртатаççĕ.

Касăри пĕтĕм ача-пăча çак улмуççисем çине пăхатчĕ. Юратсах каймастчĕ Ильтукан пичче панулмисемпе хăналама. Варук аппа вара: «Мĕн тăватăн эсĕ, ват пусупа, çак вĕтĕ панулмисемпе?» — тесе калакалатчĕ стариккине.

Кунĕпе чупса çÿресе те ывăнма пĕлмен ача-пăча тÿпене кĕмĕл пек çутă уйăх тухсан та улмуççисем çине пăхса савăнма пуçтарăнатчĕ. Хăюллăраххисен карта çине хăпарма тытăнсан вара пурте çывăхарах килетчĕç. «Витюк, мана та парха!», «Ав çÿлтине, тăрринчине тат, Женька...» — тенĕ сасăсем илтĕнме пуçлатчĕç. Хăш чухне лайăххах вĕçленетчĕ ку ĕç, хăш чухне вара...

Пĕрре эпир те тантăшсемпе пĕрле кайса курар-ха терĕмĕр. Çитсе хулăн турат çине чиперех вырнаçнăччĕ, алăк сасси чĕри-ик! туни илтĕнчĕ. Касçхине панулми çиме килни аван маррине пĕлсе, турат çинчен сике-сике антăмăр та мĕн пур вăйран чупса Наçтук аппан пÿрчĕ хыçне пытанса тăтăмăр. Сиксе тухас пек тапакан çамрăк чĕресем кăшт лăплансан кĕтесрен пуçсене кăларса пăхрăмăр. Куçа чи малтан шурă япала курăнчĕ. Тĕлĕнсе, тимлесе пăхрăмăр: Ильтукан пичче аялти шурă йĕмпех тухса тăнă иккен... Хăрах аллинче — хулăн туя, тепринче — витре. Шурă йĕмпе вăл хыпаланнă пирки тухнă. Анчах мĕншĕн туя тата витре хăйпе пĕрле илсе тухнă?

Елена ЕРМИЛОВА.

«Шăнкăрав» редакторĕ Вера АЛЕКСАНДРОВА.